**Ырă ĕне**

Кĕтӳ ярсан каçхине
Хамăр ĕне сассине
Эп таçтанах паллатăп,
Хапха уçма васкатăп.
Ĕне калать: «Му-ук, му-ук,
Мана илме хирĕç тух!
Хирте шăрăх пулнипе
Ĕçес килет кунĕпе.
Аш хыппине ирттерме
Пур-и лĕп шыв – çăнăх шыв?
Уншăн çутă витрене
Сĕт антарăп – су та су!»
Анне суса кĕрсенех
Эп ăшă сĕт ĕçетĕп.
Вара ырă ĕнене
Эп çитерме вĕçетĕп.

*Волкова, М. Ырă ĕне : [сăвă] / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 261-262.*